26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
27
ШАМАТКУН
234(6471) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИ фрончĕн çарĕсем, ăнăçлă наступление малалла вăйлатса пырса, аякран кайса çавăрса илмелли хăюллă маневр тунă та, паян, ноябрĕн 26-мĕшĕнче, Белоруссин область тата пысăк промышленность центрне — ГОМЕЛЬ хулине — чугун çулсен паха узелне тата нимĕçсен Полесье енчи оборонин тĕреклетнĕ хăватлă пунктне тытса илнĕ

ГОМЕЛЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче ГОРБАТОВ генерал-лейтенантăн, РОМАНЕНКО генерал-лейтенантăн, ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-лейтенантăн çарĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн РУДЕНКАН летчикĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă:

ЧЕРВОНИЙ генерал-майорăн 121-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ, КОНОВАЛОВ полковникăн 283-мĕш Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизийĕ, БУЛАТОВ полковникăн 96-мĕш стрелковăй дивизийĕ, МАССОНОВ полковникăн 217-мĕш Унечски стрелковăй дивизийĕ, СЕНЧИЛО генерал-майорăн 102-мĕш Инçет-Хĕвелтухăçри Новгород-Северски стрелковăй дивизийĕ, КОРОЛЕВ полковникăн 22-мĕш артиллери дивизийĕ, УШАКОВ подполковникăн 584-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ПОДОЛЬСКИЙ подполковникăн 295-мĕш гвардейски тупăллă артиллери полкĕ, ЮСУПОВ полковникăн 1179-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ДЕРБЕНЕВ подполковникăн 481-мĕш минометнăй полкĕ, ОСТРЕЙКО подполковникăн 37-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, ЦАРЕВ подполковникăн 92-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă минометнăй полкĕ, ФЕДОРЧУК майорăн 741-мĕш мото-инженернăй батальонĕ, МАСИК подполковникăн 85-мĕш понтонсемпе кĕперсен батальонĕ, ЛОГИНОВ полковникăн 57-мĕш инженерно-сапернăй бригади, АНДРЕЕВ подполковникăн 253-мĕш танковăй полкĕ, ПОЛЕЩУК майорăн 231-мĕш танковăй полкĕ, МЯЧЕВ подполковникăн 1444-мĕш хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ, ФЕДОРЕНКО полковникăн 301-мĕш бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ, БЕРКАЛЬ подполковникăн 282-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, ФЕДОРОВ полковникăн 273-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, КРУПСКИЙ полковникăн 299-мĕш Нежински штурмовой авиаци дивизийĕ, ИВАНОВ полковникăн 286-мĕш Нежински истребительнăй авиаци дивизийĕ, ФЕДОРОВ майорăн 506-мĕш уйрăм пулеметпа артиллери батальонĕ.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ГОМЕЛЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ГОМЕЛЬСКИ» тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăссене çапла чĕнмелле тăвас:

121-мĕш гвардейски Гомельски стрелковăй дивизи,

283-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Гомельски стрелковăй дивизи,

96-мĕш Гомельски стрелковăй дивизи,

22-мĕш Гомельски артиллери дивизийĕ,

584-мĕш Гомельски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

295-мĕш гвардейски Гомельски тупăллă артиллери полкĕ,

1179-мĕш Гомельски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

481-мĕш Гомельски минометнăй полк

37-мĕш гвардейски Гомельски минометнăй полк,

92-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Гомельски минометнăй полк,

741-мĕш Гомельски мото-инженернăй батальон,

85-мĕш Гомельски понтонсемпе кĕперсен батальонĕ,

57-мĕш Гомельски инженерно-сапернăй бригада.

253-мĕш Гомельски танковăй полк,

231-мĕш Гомельски танковăй полк,

1444-мĕш Гомельски хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ,

301-мĕш Гомельски бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ,

282-мĕш Гомельски истребительнăй авиаци дивизийĕ,

273-мĕш Гомельски истребительнăй авиаци дивизийĕ,

506-мĕш Гомельски уйрăм пулеметпа артиллери батальонĕ.

217-мĕш Унечски стрелковăй дивизне, 102-мĕш Инçет-Хĕвелтухăçри Новгород-Северски стрелковăй дивизне, 299-мĕш Нежински штурмовой авиаци дивизине тата 286-мĕш Нежински истребительнăй авиаци дивизике, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш хут чапа тухнăскерсене, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, ноябрĕн 26-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ ГОМЕЛЬ хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм пĕр хут харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ лайăх çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ГОМЕЛЬ хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕрĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕ.

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ Семен КОНОВАЛОВ

Тăван çĕршывшăн пыракан хĕрӳллĕ çапăçусенче совет воинĕсем, Хĕрлĕ Çарăн чапа тухнă полкĕсемпе дивизийĕсем пысăк геройлăхпа ăсталăх кăтартса парăççĕ. Пирĕн юратнă çĕршывăмăр хăйĕн шанчăклă ывăлĕ-хĕрĕсен çапăçури паттăрла ĕçĕсене питех те пысăка хурса хаклать.

Çурхи хĕвелле кунсенчен пĕринче, апрелĕн 1-мĕшĕнче, радио савăнăçлă хыпар — сталинла гварди 54 мухтавлă воинне Совет Союз Геройĕн званине пани çинчен пĕлтерчĕ. Чăваш халăхĕ хăйĕн чаплă ывăлĕн Семен Васильевич КОНОВАЛОВ юлташăн ятне илтрĕ.

... Нимĕçсем, пĕр ансăр вырăна танксем тата кучухнехи ытти хăватлă вăрçă техники пухса тăратса, урса кайсах пирĕн чăссене хĕсрĕ. Çак вăхăтра совет танкисчĕсемпе нимĕçсем хушшинче йывăр та хăрушă çапăçу пуçланса кайнă. Шăп çапăçу хĕрсе пынă вăхăтра фашистсем Коновалов юлташăн танкне вут хыптарнă. Чăваш халăхĕн хăюллă ывăлĕ — лейтенант Коновалов экипажа çапла хавхалантарса пынă:

— Юлашки вăй пĕтиччен, чĕрĕмĕрсем тапма чарăниччен çапăçар, тăвансем!..

Юлташĕсем пĕрин хыççăн тепри стройран тухнă. Семен Васильевич Коноваловăн тумтирĕсене те вут хыпса илнĕ. Пĕр аллипе çунакан тумтире сӳнтернĕ вăл, тепĕр аллипе — тăшмана ăшаланă, малалла тапăнса пыракан нимĕç танкĕсем çине снаряд хыççăн снаряд кăлара-кăлара янă.

— Стоп!.. Чугун çамкаллă фриц, саншăн текех малалла пĕр пусăм çĕр те çук...

Юмахри пек паттăр чăваш ачи, самантлăха хăйĕн тумтирĕсене вут хыпса илнине те манса, юлашки вăйхалне пухса, тăшман танкĕсен çулне пӳлсе тăнă. Вăл тăшмана пĕр утăм та малалла яман.

Семен Васильевич Коновалов—Тутар республикинчи чăваш ялĕнче — Ямбулатра — 1920 çулта çуралнă. Вăрçăччен вăл колхозра ĕçленĕ, вăрçă умĕн çар шкулĕнче вĕреннĕ. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах—фронтра, тăшмана хирĕç хăйне-хăй шеллемесĕр, паттăррăн çапăçать. «Ылттăн Çăлтăрпа» Ленин орденĕсĕр пуçне унăн анлă кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ тата «За оборону Сталинграда» медаль ялкăшса тăраççĕ. Нумаях пулмасть Совет Союзĕн Геройĕ лейтенант С. В. Коновалов хăйсен тăван ялне килсе кайнă.

Семен Васильевичăн йĕкĕреш тăванĕ—Порфирий пур. Вăл та паттăр воин. Унăн кăкăрне виçĕ орден илемлетсе тăрать.

Чăваш халăхĕ, савăн! Çак Аслă вăрçă иĕтнĕ хыççăн пулакан чаплă уяв кунĕ тăванлă халăхсен хисеплĕ кĕрекинче пулма мухтавлă ывăлусем пур санăн!

Чыс та мухтав чăваш халăхĕн паттăр ывăлне, боевой орденсен кавалерне — Совет Союзĕн Геройне Семен Васильевич КОНОВАЛОВ юлташа!

Хĕрлĕ Çар боецĕсене—ăшă тумтирсем

ХЕРЛĔ ЧУТАЙ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем тăван Хĕрлĕ Çара нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре вăй ситнĕ таран пулăшса пыраççĕ. Черпай, Туканаш, Атнар ялсовечĕсем фронтовиксем валли чылай ăшă япаласем пухрĕç. Районĕпе пурĕ алсасемпе чăлхасем 3 пин мăшăр, 127 мăшăр сăматă, 41 çĕлĕк, аялтан тăхăнмалли кĕпесем 40 мăшăр, 16 фуфайка, 22 ваткăллă шалавар, 9 кĕрĕк-пиншак, 700 килограмм ытла çăм, 600 тир пухнă. Çăматăсем йăвалас тата тирсене тăвас тĕлĕшпе ятарласа мастерской ĕçлет.

Фронтовиксем валли ăшă япаласем пухасси малалла пырать.

А. СТЕПАНОВ.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлерĕмĕр

Канашри Добролюбов ячĕпе тăракан педагогика училищинче кăçал 10 гектар çĕр çинче 2 тонна çĕрулми, 1 тонна ытла купăста, 6 центнер ытла урпа, 6 центнер помидор, кишĕр тата сухан туса илтĕмĕр. Кунсăр пуçне, лаша валли хĕл каçмаллăх сĕлĕ тата утă хатĕрлерĕмĕр.

И. МАКСИМОВ.

Государствăна сутнă тырра çийĕнчех хатĕрлев пункчĕсене леçсе парар!

Пирĕн тырă çĕршыв вăйне ӳстерме пулăшать

Красноармейски районри колхозсем тата колхозниксем государствăна 105.000 пăт тырă сутнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче государствăна тырă сутас ыйтупа митингсемпе пухусем пулса иртрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем фашистла вăрă-хурахсене хамăр тăван çĕршывран пĕр сын юлмиччен тасатассине хăвăртлатма Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшма пулчĕç. — Кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче, вăя шеллемесĕр ĕçлесе, пухăçлă тырпул туса илтĕмĕр, вăл тырпул çиме те, государствăна сутма та çитет. Хамăр тырра государствăна сутса, тăван çĕршыва вăйлататпăр, — теççĕ колхозниксемпе колхозницăсем.

Районри колхозсем тата колхозниксем паянхи кун государствăна 105.000 пăт тырă сутнă. Вăл хисепрен 10.000 пăт ытла хатĕрлев пункчĕсене леçсе панă. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем государствăна темиçе вуншар пăт тырă сутаççĕ. Янмурзинăри тимĕрçĕ Гордеев юлташ 35 пăт, колхоз председателĕ С. Ильин 35 пăт сутнă. «Партизан», «Прогресс», «Победа» колхозсем сутнă тырра çийĕнчех леçеççĕ.

С. ШАДИН

Пĕтĕм вăй-хала фронта пулăшма

ОКТЯБРЬСКОЕ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем ирсĕр тăшмана хăвăртрах пĕтерсе тăкас ĕçре Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйран пулăшма тăрăшаççĕ. Халĕ вĕсем хăйсен ирĕкĕпе государствăна тырă сутма пуçларĕç. Ку пархатарлă ĕç пур колхозсенче те патриотла çĕкленӳпе пулса пырать. Районĕпе паянхи куна 43.963 пăт тырă сутнă, вăл шутран хатĕрлев пунктне 7.812 пăт леçсе панă. Колхозсенчен кашни кунах хĕрлĕ обозсем тырăпа хатĕрлев пунктне пыраççĕ.

«Коммунизм» колхоз членĕсем государствăна 1.500 пăт тырă сутма йышăннă. Колхоз председателĕ А. Семенов юлташ 40 пăт, ватă колхозник Н. Ф. Мясников юлташ 25 пăт, колхоз бригадирĕ Архангельская 24 пăт сутрĕç.

Çавăн пекех «Венера» колхоз членĕсем те, ытлашши тырра государствăна сутассине чĕререн кăмăлласа, хăйсен ирĕкĕпе 10-шар, 20-шер пăт сутма пуçларĕç. Колхоз председателĕ Прокопьев юлташ 30 пăт, фронт сывăхĕнчен куçса килнĕ Тимофеев юлташ 20 пăт сутрĕç.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Канаша хĕрлĕ обозсем килеççĕ

КАНАШ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхоз членĕсем, тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе тĕплĕн туйса илсе, государствăна тырă сутассине куллен вăйлатса пыраççĕ. Колхозсенчен районри заготзерно пунктне хĕрлĕ обозсем килме пуçларĕç.

Çак кунсенче кашни колхозрах ытлашши тырра государствăна сутас ыйтупа пухусем пулса иртрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем перекетленĕ тырра йăлтах государствăна сутма кăмăл тăваççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, 1.000 пăт тырă сутма йышăнса, заготзерно пунктне леçме тытăнчĕç. «Красное пламя» колхоз членĕсем 7.900 пăт сутма пулчĕç. Çавăн пекех Доронин ячĕпе тăракан, «Броневик», «3-мĕш пятилетка» колхоз членĕсем те государствăна темиçешер çĕр пăт тырă сутма пулчĕç.

Ф. АНТОНОВ.

Государствăна сутнă кашни пăт тырă—тăшман вилĕмне çывхартать

ШАХАСАН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен хуçалăхĕнчи ытлашши тырра государствăна сутаççĕ.

Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз паянхи кун тĕлне—5.400 пăт, Березовка колхозĕ — 6.000 пăт, Куйбышев, Тельман ячĕсемпе тăракан тата «Заря» колхозсем — 4.500-шер пăт, Ухманти «Победа» колхоз — 5.400 пăт сутрĕç.

Ухманти «Победа» колхозăн председателĕ Иван Захаров 30 пăт сутрĕ. Унтан счетовод Рогожкин, колхоз председателĕн заместителĕ Осипов юлташсем те юлмарĕç, вĕсем 30-шар пăт сутрĕç.

Государствăна тырă сутас ĕçре ялти партипе комсомол тата совет активĕ пример кăтартать. Çакна кура 61 çулхи колхозница Харитонова юлташ государствăна пĕр центнер тырă сутма кăмăл турĕ. Çавăн пекех Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Христофоров юлташ та государствăна 5 центнер тырă сутрĕ.

Ку ĕç районри пур колхозсенче те куллен кун вăйлансах пырать.

П. ПЕТРОВ
ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Комсомолецсем тырă сутаççĕ

СЕНТЕРВАРРИ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолăн Умачкари пуçламĕш организацинче 10 комсомолец. Вĕсем кашниех хăйсен перекетленĕ тыррине государствăна сутма пулчĕç. Н. Костров, А. Камбулов, В. Илларионов комсомолецсем пуринчен малтан 15-шер пăт сутрĕç те ĕнтĕ. Тырă сутасси малалла пырать.

Н. ЕГОРОВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Çак кунсенче пирĕн ПРОПОЙСК районĕнче тăракан çарсем нимĕçсен фашистла çарĕсене хирĕç наступлени пуçласа янă. СОЖ тата ПРОНЯ шывĕсем урлă ăнăçлăн каçса, пирĕн çарсем виçĕ кун хушши вăйлă çапăçнă хыççăн тăшман оборонин вăйлă çирĕплетнĕ тăрăхне 60 километр сарлакĕш татса кĕнĕ, 18 километртан пуçласа 45 километр таран шалалла кĕрсе кайнă, Могилев облаçĕнчи район центрне — ПРОПОЙСК хулине, Гомель облаçĕнчи район центрĕсене — КОРМА хулине тата ЖУРАВИЧИ ялне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 180 пункта ытла йышăнса илнĕ, вĕсен шутĕнче УЗГОРСК, УЛУКИ, РАБОВИЧИ, ЖЕЛЕЗИНКА, ШЕЛОМЫ, ВАСЬКОВИЧИ, РЖАВКА, ГАЙШИН, БЕЗУЕВИЧИ, ТЕРЕХОВКА, ЧЕРНЯКОВКА, СЛАВНЯ, ХЛЕБНО, ЗОЛОТОМИНО, КОСЕЛЬ, САЛАБУТА, РУДНЯ, ЛИТВИНОВИЧИ, ЗЯТКОВИЧИ, РОГИ, ПЕРЕГОН, РЕКТА, СТАРЫЙ БЫЧ, НОВЫЙ БЫЧ, СТАРАЯ АЛЕШНЯ, НОВАЯ АЛЕШНЯ, ДОБРЫЙ ДУБ, БОЛЬШАЯ ЗИМНИЦА, ДРАГУНСК, ХАТОВНЯ, ПОЛЯНИНОВИЧИ, ИСКАНЬ, СЕЛЕЦ-ХОЛОПЕЕВ, ОБИДОВИЧИ, ВЕТЬ ятлă пысăк ялсене.

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем ГОМЕЛЬ хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

РЕЧИЦА хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçнă, нимĕçсенчен БОРОВИКИ, РОСОВА, СТРАКОВИЧИ, УЗНАЖ, СЛАВАНЬ, ОСТАШКОВИЧИ, КАРПОВИЧИ, КОРЕНИ, КОСИТОВ, ХОМИЧИ ятлă пунктсене, çавăн пекех тата ЖЕРДЬ, ОСТАНКОВИЧИ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ, çапла вара пирĕн çарсем ЖЛОБИНПА КАЛИНКОВИЧИ хушшинчи чугун çула татса пăрахнă.

ПРИПЯТЬ шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, темиçе ял тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче — ДЕРЕВИЩЕ, МОКЛИЩЕ, ХВОЙНОЕ, ГНОЕВО, ТУЛЬГОВИЧИ, ТЕШКОВ, ЛИХОВНЯ, ДАНИЛЕЕВКА ятлă ялсем.

КОРОСТЕНЬ хули районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотин атакисене сире-сире янă.

ЧЕРНЯХОВ тата БРУСИЛОВ районĕсенче пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин атакисене сире-сире янă.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, КРЮКОВ ятлă район центрне тытса илнĕ. Çавăн пекех тата халăх пурăнакан ДЕМУРОВКА, РАКОВКА, САДКИ, ПАВЛЫШ, СМЕТАНОВКА ятлă пунктсене тата БУРТЫ, ПАВЛЫШ ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 49 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Пирĕн Пропойск районĕнчи çарсем Сож тата Проня шывĕсем урлă каçнă та хаяр çапăçусем хыççăн тăшман оборонине татса кĕнĕ. Ку участокра нимĕçсем питĕ лайăх позицисем йышăнса тăнă. Кунта вĕсем укреплениесем тунă, çав укреплениесене сарлака шывсем хӳтĕлесе тăнă. Совет чаçĕсем, вăрманлă-шурлăхлă вырăнсенчи йывăр условисенче кĕрешсе, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Могилев облаçĕнчи район центрне — Пропойск хулине, Гомель облаçĕнчи Корма тата Журавичи ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 180 пункта ытла йышăнса илнĕ. Тăшмана питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ. Пĕр Пропойск хулишĕн пынă çапăçусенче кăна 2.000 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем нимĕç пехотин икĕ полкне аркатса тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче —7 танк, 25 хир туппи, хăй тĕллĕн çӳрекен 7 тупă, çар пурлăхĕн 8 складĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Речица хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, малалла ăнăçлăн куçса пырса, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Совет боецĕсем, Жердь тата Останковичи ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илсе, Жлобинпа Калинковичи хушшинчи чугун çула татса пăрахнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 3 артиллери батарейи, 5 йывăр миномет, боеприпас склачĕ, апат-çимĕçпе выльăх апачĕн складне тытса илнĕ.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем Крюков ятлă район центрне тытса илнĕ. Тăшман çав паха пункта тытса тăма тăрăшса, ун тавра виçĕ оборона линийĕ тунă. Совет чаçĕсем нимĕçсен оборонине татнă та хаяр çапăçусем хыççăн Крюкава, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем, малалла тапăнса пырса, Бурты тата Павлыш ятлă чугун çул санцийĕсене тытса илнĕ. Тăшмана çынсем тĕлĕшпе пысăк çухату кӳнĕ. Нимĕçсен 20 танкне тата 6 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пирĕн чаçсем 2 бронемашина, хăй тĕллĕн çӳрекен пĕр тупă, 14 хир туппи тата 30 автомашина тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур

* * *

Баренц тинĕсĕнче тăшманăн пĕрле 12.000 тонна таякан танкерĕпе суднине шыва путарнă.

* * *

Ленинград облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ ноябрь уйăхĕнче нимĕçсен 18 çар эшелонне, 2 бронепоездне тата çулсемпе кĕперсем юсаса çӳрекен поездне ӳпĕнтерсе янă. Тупăсемпе автомашинăсем турттарса пыракан 26 платформа, бронетранспортерсемпе тягачсем тиенĕ 9 платформа, тĕрлĕрен çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 100 вагон ытла çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Çав крушенисенче гитлеровецсем нумай вилсе пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 384-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 536-мĕш полкăн 6-мĕш

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Франц Дитц çапла каласа кăтартнă: «536-мĕш полк чи юлашки вăхăтчена Францире, Сент-Омер хулинче тăчĕ. Октябрь уйăхĕн юлашки кунĕсенче дивизие Хĕвелтухăç фронтне ячĕç. Эпир çак хуласем урлă килтĕмĕр: Париж, Вормс, Франкфурт, Лейпциг, Дрезден, Краков, Львов. Винница хулинче чарăнмалла пулчĕ. Малалла поездпа кайма май килмерĕ, мĕншĕн тесен чугун çулсем поездсемпе тулса ларнăччĕ. Пире вагонсем çинчен антарчĕç те пĕр пайне çуран, тепĕр пайне грузовиксем çине лартса, фронтăн Кривой Рог хули патĕнчи участокне ячĕç. Малтанхи позицисене çитнĕ кунах пирĕн подразделенисене вырăссем минометсемпе вăйлăн персе йывăр çухатусем кÿчĕç. Францире тăнă чухнех эпĕ пирĕн лару-тăру ним шанчăксăррине туйса илтĕм. Хамăн икĕ чи çывăх юлташсемпе пĕрле эпĕ май килсе тухсанах тыткăна парăнтăм».

* * *

Киев облаçĕнчи Комаровка ялсовечĕн председателĕ Максим Наркевич, шкул директорĕ Николай Варич, учительница Харитина Зубер, колхозник М. Коваль тата ыттисем те нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Комаровка ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çапла каласа кăтартнă: «Гитлерла пуçкасакансем хăйсем пуç пулса тăнă вăхăтра пирĕн ялти нумай çынсене асаплантарса вĕлерчĕç е персе пăрахрĕç. Нимĕçсем пуринчен те ытларах Роман Некоза колхознике питĕ тискеррĕн асаплантарса, мăшкăлласа пĕтерчĕç. Асаплантарса вĕлерес умĕн фашистла чунилензсем ăна хăй валли шăтăк алттарчĕç. Нимĕçсем Яков Романенкона, Макар Барановские, Григорий Дунайнăя, Сергей Кузьковоя, Кузьма Синещеке тата ытти çынсене те тытса хупрĕç. Вĕсене нумай вăхăт хушши гестапо тĕрминче тискеррĕн асаплантарса пурăнчĕç, унтан вара таçта илсе кайрĕç. Каялла чакма пуçласан, нимĕçсем яла пĕтĕмĕшпех çаратса тухрĕç, колхозăн тата колхозниксен япалисемпе пурлăхне темĕн чухлĕ пĕтерсе тăкрĕç е çунтарса ячĕç».

Шупашкар хула Совечĕн Сессийĕ

1943 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче Шупашкар хула Совечĕн 22-мĕш Сессийĕ пулса иртрĕ.

Сесси Шупашкар хулин бюджетне 1943 çулхи вунă уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен хула Совет исполкомĕн финанс отдел заведующийĕн Прокопьева юлташăн докладне итлерĕ.

— Хулари ĕççыннисем, — тет докладчик, — отечественнăй вăрçă кунĕсенче, пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пекех, партипе правительство хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшас тата государствăн финанс хăватне ÿстерес тĕлĕшпе тăвакан мĕнпур ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ. 1943 çулхи иккĕмĕш Военнăй заема хулари рабочисемпе служащисем хушшинче 9.733.000 тенкĕлĕх, колхозниксем хушшинче 170.000 тенкĕлĕх сарнă. Укçапа япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене хулара мĕн пурĕ 1.560.000 тенкĕлĕх сарнă.

Шупашкар хула совечĕн 1943 çулхи бюджетне 12.958.000 тенкĕлĕх çирĕплетнĕ. Кăçалхи 10 уйăх хушшинче çав бюджета çакăн пек пурнăçа кĕртнĕ: тупăшсем тĕлĕшпе — 9.408.000 тенкĕ чухлĕ (çакă вăл тупăшсен планне 72,6 процент тултарни пулать), расходсем тĕлĕшпе 8.468.100 тенкĕ чухлĕ (çакă вăл расходсен планне 65,4 процент тултарни пулать).

Хулари чылай предприятисемпе учрежденисем хăйсен бюджет умĕнчи обязательствисене начар пурнăçласа пыраççĕ. Пуринчен ытла хулари коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем бюджета начар пурнăçлаççĕ. Колхозниксен çурчĕ 1943-мĕш çулхи бюджета 56,2 процент кăна пурнăçланă.

Водосвет 10 уйăх хушшинче электроэнерги памалли çулталăкри плана 55,5 процент çеç пурнăçланă. Хулари предприятисемпе учрежденисене тата халăха электроэнерги планпа пăхнинчен 1.378 пин киловат-сехет чухлĕ сахалтарах панă, урăхла каласан, 10 уйăхри плана вăл 78,2 процент кăна пурнăçланă. Электростанци руководителĕсем топливăна перекетлессишĕн кĕрешмеççĕ. Кăçал унта нефте 162,4 тонна ытларах расходласа пĕтернĕ. Кунта машина хуçалăхĕ те чăтма çук начар вырăнта тăрать. Машинăсене капитальнăй ремонт тумалли 10 уйăхри плана 51,9 процент кăна пурнăçланă. Электростанци начар ĕçленине пула хулари 6 предприяти кăна 10 уйăх хушшинче çĕршывпа фронта 10.377.000 тенкĕлĕх продукци паман, государство бюджетне 4.433.000 тенкĕ чухлĕ укçа сахалтарах панă.

Çавăн пекех докладчик кинотеатр, коммуналлă мунча, гужтранспорт, промысла предприятийĕсенчен — «Металлист», «Красный кустарь», «Кожупряжь», «Красный мебельщик» артельсем бюджет умĕнчи обязательствăсене начар пурнăçланине палăртать. Акă илер, коммуналлă мунчана, вăл темиçе уйăх хушши хăйĕн планне пурнăçласа пымасть. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне унăн 15,8 пин тенкĕлĕх тăкак пулнă.

Расходсем енĕпе те бюджета çителĕксĕр пурнăçласа пынă. Хулана лайăхлатмалли, обществăллă-культурăллă ĕçе çĕклемелли чылай мероприятисене пурнăçа кĕртмесĕр хăварнă.

Кун хыççăн сесси Шупашкар хула Совечĕн бюджет комисси председателĕн Зимин юлташăн содокладне итлерĕ. Ку ыйту тăрăх прените 8 çын тухса калаçрĕç.

Сесси хула бюджетне 1943 çулхи 10 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен калакан отчета çирĕплетрĕ.

Сесси организациллĕ ыйтупа хула Совет исполкомĕ çумĕнчи оборона тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссин председателĕ пулма И. П. Петров депутата çирĕплетрĕ.

И. С. НИКИТИН

Русь

Кăн-кăвак тÿпен
Пурçăн пат̆арĕ
Хуттине — курап
Çĕсенхи çиçет.

Хирсенче шывсем,
Пĕлĕтрен çÿлте,
Улăп пек тусем
Çĕмлесе ларăç.

Хирсенче шывсем
Хумханса юхаç,
Тĕрлĕрен çĕре
Çул усса тухаç.

Кăнтăра пăхап:
Çÿллĕ хăмăш пек
Ылттăн тырă-пул
Кашласа ларать.

Пустав витнĕ пек
Ешĕл улăхĕ
Лăпкă çилпеле
Хумханса выртать;

Пахчисем тулли
Виноград çырли
Сар хĕвел çинче
Шăранса пиçет.

Çурçĕре пăхап:
Тавралла шавах
Мамăк шурă юр
Çавăранса тăрать;

Кăкрине çĕклет
Сивĕ тинĕсĕ,
Капланан пăрне
Пăлхатать, ватать;

Пĕлĕтсем çине
Вут çути ÿксе
Сĕм-хура çĕре
Çутăтса ярать...

Сардака эс, Русь,
Ытарма та çук
Илемĕлле́н
Йăлкăшса тăран!

Санăн мар-ши вăл
Сарлака хирсем —
Паттăрсен вăйне
Виçесе пăхма?

Санăн мар-ши вăл
Çых ятра мулу,
Кĕреке тулли
Ыр ĕçкĕ-çикĕ?

Санăн мар-ши вăл
Тусусемпĕн — çай,
Тăшмансем валли —
Çивĕç, çутă хĕç?

Санăн мар-ши вăл
Паттăрла хăват,
Авалтан килен
Сăвапу, чапу?

Кам вăйне пулса
Мĕскĕленнĕ эс?
Хура кун кама
Пуçна тайнă эс?

Уйсене, хирте,
Çын масарсене
Шаршланса выртать
Тăшмансен шăмми!..

Пит авалим-ха
Анăçран сана
Тăвăл пĕлĕтĕ
Хупăрланăччĕ?

Çав тăвăлпала
Çĕр кисреннĕччĕ
Ун хаярлăхне
Пывăç тÿннĕччĕ.

Саласем, ялсем
Çуннине пула
Хура тĕтĕм çеç
Мăкăрланнăччĕ!

Ыхурав пачĕ çеç
Халăха ĕмпÿ —
Пĕр çын пек тăрса
Сĕкленейрĕ Русь,

Ваттине вĕтти,
Хĕрĕ-арăмĕ
Кар пустăрăнчĕç,
Çитрĕ юн ĕçки!

Хăнасем вăра
Шурă юр айнех
Выртса юлчĕçĕ
Емĕр-ĕмĕрлĕх.

Çилтăман кăна
Йĕрчĕ вĕçĕмсĕр,
Йĕрчĕ-макăрчĕ
Çурçĕр тăвăлĕ!

Халĕ акă сан
Хулусем тулли
Савăнса утать
Вырăс халăхĕ.

Тинĕсем тăрăх
Инçетри çĕртен
Карапсем килеç
Пуç тайма сана.

Ешĕрет уй-хир,
Каш-кашлать вăрман.
Йăлкăшса выртать
Ылттăн-кĕмĕлĕ.

Çĕнче пур тенче
Кĕтессисене
Сан çирĕн çÿрет
Чаппала мухтав.

Кам-ши, Русь, сана
Чунтан савмĕ халь,
Кам тăван вине
Тесе чĕнмĕ-ши?

Сан чысуиăн халь,
Хĕсĕк кун çитсен,
Виличчен вăрçса
Пуç хума шел мар!

1851 ç.

И. ТУКТАШ куçарнă.

„УЧЕНĂЙ ЗАПИСКĂСЕМ"

Ломоносов ячĕпе тăракан Мускаври университет 14 том «Ученăй запискăсем» кăларать. Ку запискăсенче вырăссен наукипе культури тĕнчери наукăпа культурăн историйĕнче мĕнле вырăн йышăнса тăнине кăтартса панă. (ТАСС).

Республика тăрăх



Тава тивĕçлĕ рационализатор

Ишлей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çын И. Г. Хлонин молотилкăн приводне чугун вырăнне йывăçран туса панă. Çавăнпа çав молотилкăна кăçал 6 лаша вырăнне 4 лаша çеç кÿлсе ĕçлеттернĕ. Кÿршĕри „Осоавиахим" колхозăнне те вăл çаплах туса панă. Вĕсем вара 6 лаша вырăнне 3 çеç кÿлсе ĕçлеттернĕ. Çапла майпа колхозра кăçал авăн çапнă çĕрте лаша вăйне нумай перекетленĕ.

Ÿкерчĕк çинче: рационализатор И. Г. Хлонин (сулахайра) тата вăл йывăçран тунă привод (сылтăмра).

Н. Данилов фото ÿкерчĕкĕ.

☐ **Рабочисене тăванла пулăшу.** Калинино районĕнчи колхозсем кăçал кĕркунне, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, Çĕмĕрле комбинатĕнчи рабочисене государство хакĕпе 10 тонна çĕрулми, 20 тонна ытла купăста тата ытти пахча çимĕçсем сутрĕç. Вăл шутран Шĕнерти „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз 7 тонна купăста, 5 тонна çĕрулми, Тури Карачурари „Путь Ленина" колхоз 3 тонна çĕрулми сутнă.

☐ **Ертсе пыракан работниксен вĕренĕвĕ.** РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи промысла кооперации управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕн аппаратĕнче ĕçлекенсене промысла кооперации ĕçĕсемпе тĕплĕреххĕн паллаштарас шутпа, техминимум кружокĕ организациленĕ. Кружокра ертсе пыракан работниксем промысла кооперации ĕçне организацилесси, республикăри чĕртаварсемпе энергетика ресурсĕсен пуянлăхĕсем тата вĕсемпе усă курасси, промысла артелĕсене районсенче мĕнле вырнаçтарни, тир-сăран, супăнь тата ытти япаласем тăвакан производствăсене мĕнле организацилесси çинчен вĕренеççĕ.

☐ **Супăнь тăвакансен курсĕ.** Нумай пулмасть республикăри промысла артелĕсенчи супăнь тăвакан производствăсенче ĕçлекенсен курсĕ пулса иртрĕ. Курсра вĕсене çĕнĕ йышши супăньсем тума вĕрентнĕ. Çитес кунсенчех республикăри чылай артельсенче çĕнĕ йышши супăньсем тума тытăнаççĕ. Производствăсене организацилеме пулăшма инженерла-техникла работниксем вырăнсене тухса кайнă.

☐ **Уйрăм профессисемпе ĕçлекенсен ăмăртăвĕ.** Канашри вагонсем юсакан заводра уйрăм профессисемпе ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăрту пуçарнă. Ăмăртăва хутшăнса, вагонсем юсас тĕлĕшпе уйăхри нормăна 230 процентран кая мар тултаракан, брак пулассине пĕтĕмпех пĕтернĕ, икĕ çынна стахановла ĕçлеме вĕрентекен, ĕç вырăнне культурăллă тытакан слесарь-вагонника отличник-слесарь ятне параççĕ. Çавăн пекех унта отличник-столяр, отличник-кузнец, отличник-токарь ятне илессишĕн ăмăрту сарăлса пырать.

☐ **Рабочисем валли лекцисем.** Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри профсоюз комитечĕн культура комиссийĕ рабочисем валли лекцисем туса ирттерет. Нумай пулмасть пĕр госпитальре ĕçлекен майор Семенов юлташ пĕр цехра „1812 çулхи вăрçă" çинчен лекци туса панă. Рабочисем лекцие пысăк интереспа итлерĕç. Малашне лекцисем ытти цехсенче те пулаççĕ.

☐ **Чугун çул училищинче вĕренекенсене — наградăсем.** Канашри чугун çул училищин дирекцийĕ ĕçре çитĕнÿсем тунăшăн вĕрентекенсемпе вĕренекенсене — Соколов, Федин, Павлова, Кащеев, Майоров, Фролова тата ытти чылай юлташсене укçан тата хаклă япаласем парса премилерĕ. Комсомолец Касьянов юлташ СССР Совнаркомĕн ĕç резервĕсен управленийĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Училищĕри паллă мастера Смоляков юлташа ĕç резервĕсен управленийĕ «Отличник трудовых резервов» значекпа наградăланă.

Ют çĕршывсенче

Болгарири „Отечественнăй фронтăн" программи

СТАМБУЛ, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Софирен пĕлтернĕ тăрăх, Болгарири халăх хушшинче «Отечественнăй фронт» программине çапнă листовкăсене питĕ нумай салатнă, халĕ те салатаççĕ. Кунта Стамбула илсе пынă «Отечественнăй фронт» программине пичетленĕ листовкăн текстне илсе пичетлетпĕр.

«Болгари халăхĕпе унăн çарĕн тата патриотла интеллигенцин хальхи историллĕ вăхăтри чи пысăк тивĕçĕ — Болгарие çăлса хăварма Отечественнăй фронта пĕрлешни пулать.

«Отечественнăй фронт» хăй умне халех тумалли çакăн пек задачăсем лартать:

1. Болгари халăхне пĕтерсе лартакан гитлерла вăрçа Болгарие хутшăнтарма памалла мар.

2. Германипе Итали чуралăхне хирĕç кĕрешекен серби халăхне пусарма янă Болгари çарĕсене халех каялла чĕнсе илмелле.

3. Болгария гитлерла Германипе тата ытти тĕнĕл держависемпе çыхăнса тăрассине пĕтермелле, Болгари çĕрне Германин фашистла çарĕсенчен тата гестапо бандичĕсенчен халех тасатмалла.

4. Германие тата ытти тĕнĕл держависене апат-çимĕçпе чĕр-тавар ăсатса тăрассине чармалла, апат-çимĕçе хамăр çарпа халăха парса тăмалла тата куллен кирлĕ япаласене халăха йÿнĕ хакпа парса тăмалла.

5. Атлантика хартийĕ тăрăх болгари халăхĕн наци интересĕсене сыхлама Балканри ытти халăхсемпе туслă килĕшÿсем тумалла, çавăн пекех тата Совет Союзĕпе, Англипе, Америкăпа тата ирĕке юратакан ытти çĕршывсемпе те килĕштерсе ĕçлемелле.

6. Фашизма тата гитлерла Германие хирĕç кĕрешнĕшĕн тытса хупнă çар çыннисемпе граждансене халех ирĕке кăлармалла.

7. Халăхăн политикăллă прависене, пуринчен ытла пичет, пуху, пĕрлешÿ ирĕклĕхĕсен прависене çĕнĕрен вăя кĕртмелле, конституцие халăха хирĕç пыракан фашистла законсене пурне те пăрахăçламалла.

8. Хамăр çара фашистсен аллинчен тытса илмелле, çав çар халăха хирĕçле ĕçсем тума ан пултартăр тесе, мĕн тума май пуррине пурне те тумалла, офицерсене, унтер-офицерсене тата салтаксене граждан прависем памалла.

9. Фашистсен «Бранник» йышши организацийĕсене, «Ратниксен», «Легионерсен» союзĕсене салатса ямалла, фашистла вăрă-хурахсемпе хирĕçсĕр ĕç тăвакансене сиенсĕрлетмелле, хăйсем тунă тискер ĕçсемшĕн тивĕçлĕ ответ тытассинчен пăрăнса юлма памалла мар.

10. Халăх пуянлăхĕпе халăх ĕçне килсе тапăнассинчен хÿтĕлесе тăмалла тата хамăр çĕршыва никама пăхăнман çĕршыв туса хурса экономика енчен тĕрĕс аталанма май туса памалла.

11. Хулари тата ялти ĕçхалăхне ĕç, тупăш тата этем пек пурăнма май памалла.

12. Фашистла ирсĕрлĕхе, ытти расăсене курайманнине тата пирĕн наци хисеплĕменнине кăкласа ывăтмалла».

«Пирĕн халăхăн çак тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме, — тесе çырать малалла листовка, — отечественнăй фронтăн политикине тĕплĕн те çирĕппĕн пурнăçа кĕртме пултаракан правительство кирлĕ. Çавăнпа отечественнăй фронт хальхи сутăнчăкла, халăха хирĕçле ĕçлекен гитлерла правительствăна халех сирпĕтсе антарса, Болгари халăхĕ пулăшса тăракан Болгари правительстви туса хурас задача лартать. Çак правительство Болгарин малашнехи тытăм формине туса хуракан Халăхăн аслă собранине пухма условисем туса хурĕ тата пирĕн çĕршывăн никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварма майсем туса парĕ.

Çĕршывпа халăха çăлса хăвармалли çак программăна пурнăçа кĕртмешкĕн пурте татăклă та паттăрла кĕрешĕве тухăр».

ФРАНЦИ ХАЛĂХНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОМИТЕТ ÇУМНЕ АНГЛИ ПРЕДСТАВИТЕЛЬНЕ УЙĂРСА ЛАРТНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Дафф Купера Француз халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет çумне Пĕрлешÿллĕ Королевствăн представителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнине король çирĕплетнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ÇĔНĔРЕН ТАПĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Берлина тапăннă.

Тăваттăмĕш кварталти финанс планне вăхăтра тултарар

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, чылай районсенчи финанс органĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас тĕлĕшпе паллă çитĕнÿсем турĕç. Халĕ вĕсем, Сталин юлташăн историллĕ докладĕпе хавасланса, укçа-тенкĕ пухмалли 4-мĕш кварталти плана срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Сĕнтĕрвăрри районĕ малта пырать. Вăл ноябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне 4-мĕш кварталти плана 64,1 процент тултарнă. Унта пур тÿлевсемпе парăмсене те вăхăтра татаççĕ. Финанс работникĕсем тимлĕн ĕçленине пула укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене хăвăрт сарнă. Лотерея билечĕсене 1.372.000 тенкĕлĕх сарса укçине икĕ кун хушшинче пухса пĕтернĕ. Заем укçине те заем сарнă вăхăтрах пухса çитернĕ.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе районра Шуркасси ялсоветĕнчи налог агенчĕ Фомина юлташ малта пырать. Вăл ялхуçалăх налогĕн укçине октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех пуçтарса пĕтернĕ. Çапла ку ялсовечĕ 1943 çулта пĕтĕм çулталăк тăршшĕпех районри куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава хăйĕн аллинче тытса тăрать. Фомина юлташăн паха ĕçĕсем районри ытти финанс работникĕсене те ăнăçлăн ĕçлеме майсене кăтартса параççĕ.

Налог агенчĕсене районри финанс пайĕн инспекторĕсем Егоров, Гурьевич, Кузин, Петрова юлташсем пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем налог агенчĕсем патĕнче тăтăшах пулса вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ, кăтартусем параççĕ. Районри финанс пайĕ оперативно ĕçленипе палăрса тăрать. Финанс пайĕн заведующийĕ Анкудинов юлташ районра укçа-тенкĕ пухасси мĕнле пынине куллен пĕлсе тăрать. Вăл кая юлса пыракан участоксенче час-часах пулса ĕçпе пулăшать. Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ те укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе куллен ĕçлеççĕ. Çаксене пула ĕнтĕ район республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать.

Красноармейски, Ишлей, Вăрмар районĕсем те начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем ноябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне укçа-тенкĕ пухмалли плана 55—64 процент таран тултарнă. Ку районсенче те финанс работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пыраççĕ.

Анчах та укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен районсем сахал-ха. Çавăнпа та ĕнтĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, 4-мĕш кварталти плана тултарасси кая юлса пырать, ноябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне пурĕ 40,4 процент çеç тултарнă. Мĕнрен килнĕ-ха çавăн пек кая юлни? Лайăх ĕçлеме условисем пулманни пирки пăшăрханмалли çук. Колхозниксемпе колхозницăсем фронтшăн, çĕнтерÿшĕн пулсан нимĕн те шеллемеççĕ. Вĕсем государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра парса татма хатĕр пулнине те пĕр хутчен кăна мар кăтартса панă. Апла пулсан укçа-тенкĕ пухас ĕç кая юлни финанс работникĕсенчен, вĕсем çавăрăнăçусăр ĕçленинчен килет.

Чылай районсенчи финанс работникĕсем: инспекторсем, агентсем вăхăта, пуринчен ытла, канцелярисенче ларса ирттернĕ. Вĕсем, ялсене колхозниксем патне тухса, вĕсене укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра тÿлесе татни çĕнтерÿ тумашкăн çав тери кирлĕ ĕç пулни çинчен ăнлантарса паман, укçа-тенкĕ парăмĕсене юриех тÿлемесĕр тăракансене хирĕç татăклăн кĕрешмен. Çавна пула ĕнтĕ хăшпĕр районсенче парăмсен хисепĕ ÿссе пырать. Уйрăмăн илсен республикăра подоходнăй налог, çуртйĕрсемпе çĕр налогĕн укçине пухасси кая юлса пырать. Самообложени укçине те пухса пĕтермен. Сутуилÿ пайĕсемпе финанс органĕсем парсенче сутă тăвакансенчен вырăн укçи пухас тĕлĕшпе питех те сÿрĕк ĕçлеççĕ. Страховани укçине те вăрахăн пухаççĕ. Хăшпĕр районсем заем, укçапа япала лотерейин билечĕсен укçине халĕ те пухса пĕтермен.

Уйрăмăнах Хĕрлĕ Чутай (финанс пайĕн заведующийĕ Базранов), Пăрачков (финанс пайĕн заведующийĕ Симарзин), Çĕмĕрле (финанс пайĕн заведующийĕ Ермакова), Шăхасан (финанс пайĕн заведующийĕ Ефремов) тата Элĕк (финанс пайĕн заведующийĕ Сорокин) районĕсем питех те кая юлса пыраççĕ. Вĕсем 4-мĕш кварталти плана 33—34 процента яхăн çеç тултарнă. Асăннă 5 район государствăна обязательнăй йĕркепе тÿлемелли налогсем тăрăх 4 миллион та 516 пин тенкĕ чухлĕ парăмлă пулса тăраççĕ.

Паллах, укçа-тенкĕ пухасси çавăн пек начар пынишĕн, чи малтан, финанс пайĕсен заведующийĕсем ответлă. Вĕсем халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладра «çапăçмасăр, вăй хумасăр çĕнтерме çук. Çĕнтерĕве ăна çапăçса туянаççĕ. Çĕнтерÿ çывăх ĕнтĕ, анчах та ăна алла çавăрса илес тесен çĕнĕрен ытларах вăй хуни, пĕтĕм тыл хăйне хăй шеллемесĕр ĕçлени кирлĕ....» тесе вĕрентнинчен тивĕçлĕ выводсем туман.

1943 çулхи 4-мĕш квартал вĕçлениччен вăхăт нумай юлмарĕ. Çак кĕске вăхăтра укçа-тенкĕ пухас ĕçе лайăхлатса, плана пур тĕлĕшпе те пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле. Çакна тума пур майсем те çителĕклĕ. Финанс работникĕсен укçа-тенкĕ пухмалли плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла. Вĕсен колхозниксемпе колхозницăсене Сталин юлташăн докладне тата çĕршывпа фронта укçа-тенкĕ вăхăтра пани çĕнтерÿ тума пулăшни çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тата комсомол организацийĕсем финанс органĕсене кулленхи ĕçре пулăшса пыма тивĕçлĕ.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тултарса, фронтпа çĕршыва çĕнтерÿ тума пулăшар.

И. ЗОЛОТНИКОВ.

ЧАССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1155 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз